# Çĕнĕ Кинчерти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул

# Яков Ухсай - чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ

# Тĕллевсем:

1. Чăваш халăх поэчĕн пурнăçĕпе тата унăн пултарулăхĕпе паллаштарасси.
2. Поэт пултарулăхне паллă çынсем хак панипе паллашасси.
3. Поэт чĕлхин илемне, сăнарлăхне асăрхаса хайлавĕсене хак парасси.

Туссем калаçнă чух, тăван чĕлхемĕм,
Шур акăш тĕкĕ евĕр эс çемçе.
Санпа ман халăх чунĕпе илемлĕ
Çӳрет çӳлте те çĕр çинче вĕçсе.
Юрланă чух сассу хитре те уçă,
Каять вăрман та, хир те янраса,
Чулсем çинчи канми-тăми çăл-куçĕ
Юхса йăпаннă пек сассу таса

# Яков Гаврилович Ухсай (1911-1986)





# Мария Ухсай хĕрĕсемпе

Ухсай – пысăк поэт! Чăн-чăн халăх поэчĕ. Унăн сăвви-юрри халăх сăмахлăхĕ майлă янăрать. Халăха пĕлмесĕр, унăн сăмахлăхне ăнланмасăр, çавăн пек çепĕç, янăравлă, сăнарлă çырма çук. Çавăнпа вăл чăваш поэчĕ çеç мар, Раççей поэчĕ пулса тăрать. А. Твардовский, М. Исаковский, А. Прокофьев, А.Малышко, Петрусь, Бровка… Çак ретре тăрать чăваш поэчĕ Яков Ухсай. (Егор Исаев )

Ухсай поэзийӗнче тӑван уй-хирсен, ешӗл вӑрмансен, шӑнкӑр-шӑнкӑр ҫӑл куҫсен, тӑрӑ кӳлӗсен ҫепӗҫлӗхӗпе илемлӗхӗ, чӑваш халӑхӗн ӗҫченлӗхӗпе типтерлӗхӗ, кирек мӗнле йывӑрлӑхра та халӑхӑн сӳнми ӗмӗчӗ, пулас ҫутӑ кунсен шанчӑкӗ палӑрать, чӑваш ҫӗр-шывӗпе унӑн ҫыннисен пурнӑҫӗ курӑнать. (И.И.Иванов)

Поэтикăллă формăллă пысăк хайлавсенчен эпĕ чăваш поэчĕн Я. Ухсайăн «Кĕлпук мучи» сăвăлла повеçне юлашки çулсенчи интереслĕ те чаплă пулăмсенчен пĕри тесе палăртасшăн. (А.Фадеев)

Якку Ухсай – чăн-чăн халăх поэчĕ, пирĕн çĕр-шывăмăрăн нумай нациллĕ литературишĕн сумлă ят. Ухсай поэзийĕн хăватлă юхăмĕ унта хăйĕн тĕсĕпе, хăйĕн кĕввипе, хăйĕн шухăшлавĕпе палăрса тăрать. Эпĕ астăвасса, Александр Твардовский туслă калаçусенче унăн пултарулăхне яланах ырлатчĕ, уйрăмах поэмисене палăртатчĕ. «Тĕлĕнмелле талант!» - терĕ пĕрре ун çинчен вăл. (Мустай Карим)

# Танлаштарусем:

- Тип улăм çинĕ пек сирĕн сăввăр.
- Кăвак кăвар пек сан сенкер куçу.
- Кăвакарчăн пĕсехи пек кăн-кăвак пурçăн тутăр.
- Тăрна карти пек ушкăн шухăш.
- Ват ăмăрт кайăк пек атте-аннемĕр.
- Авмак çăра куç харшисем
- Пĕкĕльмере пĕветнĕ пĕкĕ пек.
- Шур Атăл хĕрринчи тирек пек шавлă
- Такмаксем чĕртетĕп чĕрере.
- Аслатилле кĕрлев пасар çине
- Хумсем пек ыткăнать.

# Метафорăсем

- Хĕл сивви хĕр пек илемлĕ тĕрленĕ кантăка.
- Вĕри тăхланлă тăвăл çирĕ –
- Юна, шăмма та ир те каç. («Шурă хурăнпа калаçни»)
- Шăрши пулсан, çĕр юнĕ хупă
- Тăраймĕ, парĕ хăй мулне. («Кĕсле ту тăрринче шухăша кайни»)
- Тӳпе маччин кăвак чаршавĕ
- Тăрать хĕвеллĕ люстра пек. («Вăрман юрри»)

# Сăпатлантарусем:

- Кураттăм асамат кĕперĕ
  Тăва кӳлсе утланнине.
- Таçти-таçти хитре эрминккере
  Кĕтеççĕ ăшă кĕрĕксем пире.
- Хура пӳртре ман пурнăç
  Сывларĕ мăкăрланнă тĕтĕмпе.
- Ыталанса лараççĕ ик тирек.
  Пĕр юрă çеç чуна хĕртсе вут хурĕ.

# Эпитетсем:

- шапа сассиллĕ пăчă сывлăш
- ыйхăллă тӳшек
- шăлтăр-шăлтăр шăллă сивĕ
- çавра çилсен юппиллĕ тусан
- карма çăварлă çилсем

# Анафора

- Ман мар хура çунатлă кайăк,
  Ман мар хура тăманлă каç.
- Хăш чух пиçен пек эпĕ пултăм,
  Хăш чух кĕтмел чечекĕ пек.
- Мĕн чухлĕ тимĕр-хурçă ванчĕ,
  Мĕн чухлĕ вилĕм сапаланчĕ
  Кунти сăртра, кунти хирте? («Кĕсле ту çинче шухăша кайни»)
- Тав тикĕтпе пурак панишĕн,
  Тав сухăршăн тата тепре,
  Тав ешĕл милĕк кастарнишĕн,
  Пурне те, хурăнсем, сире. («Шурă хурăнпа калаçни»)

# Эпифора

- Пÿртре те тĕтĕм йÿçĕ
  Мăян çăкри те йÿçĕччĕ. («Шурă хурăнпа калаçни»)

# Эпинафора

- Ман тантăшсем сана амантнă,
  Амантрăм эп те сан пĕвне. («Шурă хурăнпа калаçни»)

# Хĕреслĕ рифма

Эп сана вут ăшĕнчен вăраххăн
Юратса ĕненннине кура
Инкексем пулсан та, çӳçĕм манăн
Ĕлĕкхи пекех йĕпкĕн хура.
(«Çырă куçăм, ылтăнăмçăм, чунăм»)

Ака-суха туса ўстертĕм тырă,
Унтан пĕçернĕ кăпăш çăкăра
Чĕлшер касса çырма пуçлатăп юрă
Сап-сарă çулçă ўкнĕ вăхăтра.

/ / / / /

— — | — — | — — | — — | — — | —

/ / / / /

— — | — — | — — | — — | — —

/ / / / /

— — | — — | — — | — — | — — | —

/ / / / /

— — | — — | — — | — — | — — | —

**Эпитетсем:** шапăр-шăпăр çумăра, йÿле пилĕк, транкки-транкки сикнипе, шĕвĕ пылчăк, йĕм те чăп-чăпар, ачаш çиллипе, шĕвĕр пÿрнипе, вăйлăрах та чĕрĕрех çĕр те пĕлĕт те тĕнче.

**Танлаштару:** тиха пекех кĕçенет.

**Сăпатлантару:** сассем тавлашса саланаççĕ, янратаççĕ сывлăша, вăй пырса кĕрет, вăй ÿтре кĕçенет.

**Гипербола:** çичĕ вăй пырса кĕрет, çичĕ çамрăк вăй ÿтре.

**Эпинафора :**

Çичĕ çамрăк вăй ӳтре

Тиха пекех <u>кĕçенет,</u>

<u>Кĕçенет </u>те уй-хире

Савăнса чупма чĕнет.

Кĕмĕл кайăк вĕçет Шупашкар тавралла –

Ун паян Кĕсле ту тăррине каймалла.

Сывă пул, тăван кил, анлă Атăл, сыв пул,

Яш çăкаллă урам, ĕмĕрех ешĕл юл.

(Ю.Сементер)

Ĕçе хатĕрлекенĕ:

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен  Краснова И.Ф.